Парăмçăсем тата вĕсен парăмĕсем

# Куççульпе саккуна çемçетеймĕн

***Кивçен укçа илме çăмăл та каялла тавăрса пама йывăр. Çакна пирĕнтен кашниех лайăх пĕлет. Тĕрлĕ пулăшусемшĕн вăхăтра тӳлемесен те парăм пысăкланса пырать. Вăхăт иртнĕçемĕн ăна тӳлеме татах та йывăртарах. Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн тӳлессинех илер-ха, акă. “Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани” МУП вара, халăхри пек каласан, хваттер укçине тӳлемен пысăк парăмшăн суд йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн пурăнакан хваттертен кăларса ямалли мерăна йышăнма пултарни çинчен аса илтерет. “Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани” МУП пырса, парăма татмалли вăхăт пирки калаçса татăлма пыма ыйтать. Хваттер хуçисене пĕлме вĕсен списокне пичетлет.***

Нумаях пулмасть вара район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ, асăннă МУП ертӳçи Н. В. Любимов, кунти юрист Е. В. Ершова, суд приставĕсен районти уйрăмĕн пуçлăхĕ – аслă суд приставĕ Е. В. Иванова, суд приставĕ-исполнителĕ А. Ю. Захарова, районти шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕ М. Н. Замков Ярославка ял тăрăхĕнчи çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн пысăк парăмлă хваттер хуçисем патне çитрĕç. Ярославкăри нумай хваттерлĕ икĕ çуртра 54 çемье пурăнать. Мартăн 1-мĕшĕ тĕлне пурăнмалли пӳлĕмпе коммуналлă пулăшусемшĕн тӳлемелли парăм 422 пин тенкĕ ытла.

Çак кун рейд ушкăнĕ пысăк парăмлă 10 яхăн хваттерте пулчĕ. Тӳрех каламалла, чун хăпартланса тухмарĕ нихăш хваттертен те. Эпир кĕнĕ кашни хваттерте тенĕ пекех пĕчĕк ачаллă çемьесем пулчĕç.

–Халĕ “ача укçинчен” - 3 пин тенкĕрен 2 пин тӳлерĕм-ха. Кашни уйăхрах çапла тăвасшăн, – терĕ ача çулталăк çурăна çитиччен пăхма паракан отпускра ларакан хĕрарăм. – Отпуск октябрьччен, анчах тепĕр 2-3 уйăхран эпĕ ĕçе тухасшăн.

22 пин тенкĕ парăмлă çемье пулчĕ ку.

Тепĕр çемьен парăмĕ вара 27 пин тенкĕ ытла. Кунта та çулталăка та çитмен ача ют аппасемпе пиччесем мĕншĕн килнине пĕлесшĕн пулнă пек куçĕсемпе чăрлаттарса пăхрĕ. Пысăк парăмшăн суд приставĕсем радиомагнитолăпа çĕнĕ утюга “арестлесен”, 4 ача амăшĕ йĕрсе ячĕ:

– Луччĕ урама кăларса ярăр, мĕншĕн япаласене çеç илсе каятăр?

– Эпĕ халь ĕçлеме пуçларăм, тепĕр уйăхран – Мускавран килсен тӳрех тататăп парăма. Илсе ан кайăр ĕнтĕ япаласене, - тет мăшăрĕ те.

Суд приставĕсем хваттер хуçисене вĕсен прависем пирки ăнлантарчĕç:

**– 10 кун хушшинче пуçтарăннă пĕтĕм парăма тӳлесе тататăр пулсан, япаласене каялла илсе каятăр. 10 кун хыççăн “арестленĕ” япаласене суту-илӳ предприятийĕсене сутма паратпăр.**

– Кун пек чухне те эпир хваттер хуçисене майлă кайма тăрăшатпăр, “арестленĕ” япаласене магазинта хăйсен хуçисенех сутма сĕнетпĕр. Хуçисем туянмарĕç пулсан, нимех те тăваймăн, кам илет, çавна сутма тивет, – ăнлантарать суд приставĕсен районти уйрăмĕн пуçлăхĕ - аслă суд приставĕ Е. В. Иванова.

Каласа хăвармалла, “арестленĕ” япаласене суд приставĕсен республикăри управленийĕ урлă Шупашкарти 6 магазинта сутаççĕ.

– Пысăк парăмлă хваттерсене кĕрсен, ачасене куратăн та алă усăнать,– халь çеç тĕл пулакан ӳкерчĕксене курма çăмăлах маррине пытармасть район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ, “Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани” МУП ертӳçи Н. В. Любимов.

Чун ыратать çав. Пысăк парăмлă хваттер хуçисен çеç мар, çакăншăн тивĕçлĕ мерăсем йышăнакансен те. Анчах саккун чун ыратăвне те, куççуле те ĕненмест. Саккун хăйне пăхăнма хушать. Темшĕн-çке çакна хваттерте пурăнакансем маларах ăнланасшăн мар. Хамăрăн явапсăрлăхпах пулĕ çӳлерех илсе кăтартнă лару-тăру патне пырса тухатпăр. 27-30 пин тенкĕ парăм пĕр уйăхшăн тӳлемелли сумма мар вĕт. “Хваттер укçине” пĕр уйăх тӳлемесен, тӳрех çирĕп мерăсем те йышăнмаççĕ-çке-ха.

Кунта шăпах пурăнмалли пӳлĕмсемпе коммуналлă пулăшусемшĕн тӳлеменни мĕн патне илсе пыни çинчен аса илтерни вырăнлă пулĕ. Акă мĕнле ăнлантарать кун пирки çӳлерех асăннă компани юрисчĕ Е. В. Ершова:

– Пурăнмалли пӳлĕмсемпе коммуналлă пулăшусемшĕн 3 уйăх тӳлемесен, мировой судья патне пурăнмалли пӳлĕмсемпе коммуналлă пулăшусемшĕн парăма тата ăна вăхăтра тӳлеменшĕн пени шыраса илесси çинчен калакан суд приказне ыйтса заявленипе тухатпăр.

Хваттерсенче пурăнакансем пĕлеççĕ пулĕ, иртсе пыракан уйăхшăн тӳлевсене çитес уйăхăн 10-мĕш числиччен татмалла.

Ĕç-пуç вара малалла çакăн пек аталанать. Мировой судья заявленине ăна йышăннă хыççăн 5 кун хушшинче пăхса тухать. Каламалла, унта нихăш енне те чĕнмеççĕ: парăма татма ыйтаканне те, хваттерте пурăнаканне те. Мировой судья заявленине пăхса тухса йышăннă приказпа парăма шыраса илме ыйтнă заявлени копийĕсене уведомленипе парăма кĕнĕ хваттер хуçине ярса парать. Унта асăннă приказпа килĕшменни çинчен уведомленине алла илнĕ хыççăн 10 кун хушшинче пĕлтерме май пурри пирки те ăнлантарса çырни пулать.

Çав уведомленине илнĕ хыççăн 10 кунтан приказ вăя кĕрет. Вара мировой судья суд приставĕсен районти уйрăмне патшалăх пошлинине шыраса илме исполнительнăй хут ярса парать. Суд приказĕн иккĕмĕш экземплярне парăма шыраса илекене - çӳлерех асăннă компанине ярса парать.

“Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани” МУП суд приказне суд приставĕсен районти уйрăмне ярса парать (çак хушăра парăма татсан, ĕç çакăнпа вĕçленет). Малалла лару-тăру мĕн патне илсе пыни пирки хамăрăн калаçу пуçламăшĕнчех илсе кăтартрăм.

Çавăнпа та Ярославкăри нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансене çеç мар пырса тивет çакă: Муркашри нумай хваттерлĕ 63 çуртри 801 çемьене те, Мăн Сĕнтĕрти 52 çуртри 384 çемьене те, Москакассинчи 20 çуртри 179 çемьене те, Тренккăри 4 çуртри 48 çемьене те, Ярапайкассинчи ку тĕлĕшпе парăм пур граждансене те.

Çакна асра тытасчĕ: уйрăм çынсем нумай вăхăт хушши “хваттер укçине” тӳлеменни ăна вăхăтра тӳлекенсене те пырса çапать вĕт. Кулленхи юсав ĕçĕсене тăвас ĕçре чăрмавсем сиксе тухаççĕ. Нумай хваттерлĕ çуртсене тытса тăма, тĕплĕ юсав ĕçĕсем тума, çивиттисене юсама укçа-тенкĕ сахал мар кирлĕ. Апла пулсан пурин те пурăнмалли пӳлĕмсемпе коммуналлă пулăшусемшĕн вăхăтра тӳлесчĕ. Тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тумасан, çӳлерех асăннă ӳкерчĕк пысăк парăмлă кирек епле çемьере те пулма пултарать.

Приставсем алăкран шаккасан, куççульпе саккуна çемçетеймĕн. Çӳлерех асăннă тĕслĕхсем те çакнах çирĕплетсе пачĕç. Пуçтарăннă парăма вара татмах тивет. Унсăрăн суд йышăнăвĕ тата та ытларах чĕрене ыраттармалли пулса тухма пултарать: хваттерти япаласемсĕр çеç мар, хваттерсĕр те тăрса юлма пулать. Çакнашкал рейдсем малалла пыраççĕ.

**Л. ТУКТИНА.**

## Хваттерсенче пурăнакансенчен пысăк парăмлисем

***(2007 çулхи мартăн 1-мĕшĕ тĕлне, ялсем тăрăх)***

**ЯРОСЛАВКА**

– В.В. Сарилов – 15763 тенкĕ те 59 пус;
– Н.И. Павлова – 22403 тенкĕ те 26 пус;
– Е.А. Пригородова – 20660 тенкĕ те 45 пус;
– О.А. Еремин – 27146 тенкĕ те 67 пус;
– З.Н. Яравайкина – 9646 тенкĕ те 20 пус;
– П.В. Николаев – 31088 тенкĕ те 64 пус;
– Р.Н. Волкова – 9151 тенкĕ те 71 пус;
– А.Н. Мрчеев – 8247 тенкĕ те 23 пус;
– Ю.В. Сютейкин – 22207 тенкĕ те 16 пус;
– З.Н. Васильева – 28763 тенкĕ те 56 пус;
– З.П. Петрова – 17269 тенкĕ те 78 пус;
– Ю.А. Запольский – 28027 тенкĕ те 14 пус;
– Л.П. Васильева – 27844 тенкĕ те 88 пус.

**ЯРАПАЙКАССИ**

– В.А. Пайков – 13947 тенкĕ те 78 пус;
– Ю.А. Бычков – 10489 тенкĕ те 34 пус;
– А.Н. Васильева – 23998 тенкĕ те 97 пус.

**МУРКАШ**

– А.В. Систейкин – 31476 тенкĕ те 5 пус;
– П.Н. Димитриев – 22083 тенкĕ те 51 пус;
– Л.А. Соколов – 11823 тенкĕ те 90 пус;
– А.П. Федькин – 28026 тенкĕ те 15 пус;
– Ю.А. Алексеева – 10636 тенкĕ те 68 пус;
– Г.А. Владимирова – 11091 тенкĕ те 61 пус;
– Ю.А. Иванов – 28958 тенкĕ те 80 пус;
– Т.Г. Михайлова – 25709 тенкĕ те 9 пус;
– В.Н. Григорьева – 16068 тенкĕ те 3 пус;
– Н.Ф. Булай – 25800 тенкĕ те 70 пус;
– Ю.С. Ванюков – 14328 тенкĕ те 95 пус;
– В.А. Степанова – 17137 тенкĕ те 78 пус.

Парăмçăсенчен В.П. Костин тата Г.П. Гордеева пурăнмалли çурт-йĕрпе тата коммуналлă услугăсемпе усă курнăшăн пухăннă парăмсене парса татас тĕллевпе пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанине çуртсем таврашĕнчи территорисене тасатса тăма ĕçе кĕнĕ. Кунпа пĕрлех территорисене тасатма Москакассинче тата Мăн Сĕнтĕрте те парăмçăсене ĕçе явăçтарассипе ĕçсем пыраççĕ.

**МĂН СĔНТĔР**

– М.П. Васильев – 11498 тенкĕ те 15 пус;
– Г.И. Федорова – 26772 тенкĕ те 95 пус;
– А.Г. Васильев – 19122 тенкĕ те 7 пус;
– П.П. Васильев – 25243 тенкĕ те 65 пус;
– М.С. Петрова – 18754 тенкĕ те 11 пус;
– В.А. Трофимов – 41707 тенкĕ те 13 пус;
– И.А. Воробьев – 28375 тенкĕ те 52 пус;
– И.А. Пожидаева – 44747 тенкĕ те 41 пус;
– С.П. Митрофанов – 33289 тенкĕ те 27 пус.

**МОСКАКАССИ**

– Е.М. Шатрова – 53010 тенкĕ те 17 пус;
– Н.Е. Полуэктов – 25385 тенкĕ те 92 пус;
– Р.М. Яковлева – 37482 тенкĕ те 20 пус;
– А.С. Кузнецов – 22957 тенкĕ те 71 пус;
– Е.М. Алексеева – 17058 тенкĕ те 75 пус;
– В.К. Ефимов – 52839 тенкĕ те 75 пус;
– Е.В. Малькова – 15987 тенкĕ те 76 пус;
– И.П. Александрова – 26047 тенкĕ те 14 пус;
– Е.С. Васильева – 20343 тенкĕ те 28 пус;
– З.Д. Ермакова – 14541 тенкĕ те 60 пус;
– Н.П. Ягунькина – 51299 тенкĕ те 29 пус;
– В.А. Васильев – 49667 тенкĕ те 29 пус;
– Л.Г. Алексеева – 20023 тенкĕ те 66 пус.
– Р.М. Хораськина – 12715 тенкĕ те 49 пус;
– И.П. Ложнова – 12960 тенкĕ те 83 пус.

**ТРЕНККĂ**

– И.А. Белоусова – 25469 тенкĕ те 85 пус;
– Т.А. Максимова – 12198 тенкĕ те 68 пус;
– Л.И. Просина – 11047 тенкĕ те 66 пус;
– А.Н. Чернов – 15559 тенкĕ те 34 пус.

Пултаруллисене чыслатпăр

# Хастаррисем чыс-хисепсĕр ан юлччăр

Районта кашни отрасльтех хăйсен ĕçне чунтан парăннисем, ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăракан специалистсем, пултаруллă та хастар çынсем сахал мар. Чăн та ĕнтĕ вĕсем мухтава тата ырă сăмахсене тивĕçлĕ.

Раççей Федерацийĕн Ĕç кодексĕн 191 статйинче çапла çырса хунă: «Ĕç паракан хăйсен тивĕçĕсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлакансене хавхалантарать (тав тăвать, преми е хаклă парне, Хисеп грамоти парать, «Професси тĕлĕшпе чи лайăххи» хисеплĕ ята илме тăрататать).

Хастар ĕçшĕн хавхалантармалли ытти енсене коллективлă договорта е организацин шалти ĕç йĕркин правилисенче, çавăн пекех дисциплина çинчен калакан уставсемпе положенисенче палăртаççĕ. Патшалăх тата общество умĕнче тунă уйрăмах паллă ĕçсемшĕн палăрнисене патшалăх наградисене илме тăратма пултараççĕ.

Ĕçлекен çынна хавхалантармалли никĕс вăл – унăн тӳрĕ кăмăллă, эффективлă ĕçĕ. Урăхла каласан, ĕçри тивĕçĕсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçлани, ĕç тухăçлăхне ӳстерни, продукци пахалăхне лайăхлатни, пĕр вырăнта нумай çул хушши вăй хуни тата ытти ӳсĕмсем туни.

Пултаруллисене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлани уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Вăл çынсен ĕçри тата обществăлла активлăхне ӳстерме пулăшать.

2006 çулта район администрацине район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлама 185 çын валли представлени тăратнă. 4 çынна ку е вăл сăлтавсене пула Хисеп грамоти парассинчен хăтарнă. Çапла вара 181 çын район администрацийĕн Хисеп грамотисене тивĕçнĕ.

Район администрацийĕн Хисеп грамотисене илнисенчен ытларахăшĕ ял хуçалăх ĕçченĕсем - 63 çын (34,8 процент), вĕрентӳ ĕçченĕсем 33 çын (18,2 процент). Районти тĕп больница, «Ударник» хуçалăх, строительство организацийĕсем, ял тăрăхĕсем хăйсен ĕçченĕсене палăртассипе çине тăраççĕ.

Кунпа пĕрлех çавна та палăртмалла. Ытларах чухне характеристикăсене ячĕшĕн хатĕрлеççĕ, вĕсенче конкретлă çыннăн паллă енĕсене палăртни çук. Çынна ĕç коллективĕсенче палăртни те çук.

Район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлама хатĕрлеме тăратнă документсенче положенипе пăхнă пур документсем те кирлĕ. Ĕç паракансем çынсене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлама материалсем тăратнă чух вĕсенчен çирĕплерех ыйтма тивĕç, награда материалĕсене ăна паричченчен 14 кунтан кая юлмасăр памалла. Хисеп грамотипе наградăлани вĕсен ĕçне хак пани пулса тăрать.

Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин патшалăх наградисене парас йĕркене çирĕплетнĕ. Кандидатсем тĕлĕшпе çирĕп требованисем пур. Сăмахран, патшалăх наградине илме хатĕрленекен çыннăн отрасльти ĕç стажĕ 10 çултан кая мар пулмалла. Кунпа пĕрлех картлашкасем урлă сикме те юрамасть. Сăмахран, çыннăн предприятирен тав туни те, район грамоти те çук, апла пулсан республика пĕлтерĕшлĕ грамотăна илме май килмĕ.

Çавна манмалла мар. Чи малтанах награда илме кандидатурăна ĕç коллективĕнче пăхса тухмалла. Хыççăн предприятире ĕçлекен награда листне тултарать. Хыççăн вара документсене вырăнти самоуправлени органĕсене ярса пяраççĕ, отрасль структурисенче (министерствăра, комитетра) пăхса тухаççĕ. Ун хыççăн документсем Чăваш Республикин Президент администрацийĕн патшалăх наградисем енĕпе ĕçлекен комитетне пыраççĕ, хыççăн вара – Чăваш Республикин Президенчĕн патшалăх наградисем енĕпе ĕçлекен комиссине. Татăклă йышăнăва республика Президенчĕ тăвать.

Ертӳçĕсен награда хучĕ çумне паракан уйрăм требованисем пур. Кусем вĕсем предприяти юлашки 3 çул хушшинче ĕçлесе пыни пирки отчет, налуксене вăхăтра тӳлесе тăни пирки налук инспекцийĕнчен панă справка, ĕçлекенсене ĕç укçи вăхăтра тӳлесе тăнă пирки панă справка.

Награда материалĕсене пăхса тухмалли тапхăра саккунпа палăртман. Практика кăтартса панă тăрăх вара çакна валли вăтамран виçĕ уйăх çурăран тытăнса тăватă уйăх таран каять.

**Л. ТАРАСОВА,**
**район администрацийĕн вырăнти самоуправлени органĕсемпе, йĕркелӳпе кадрсен тата право ыйтăвĕсемпе ĕçлекен пайĕн ертӳçи.**

Çыру йĕрĕпе

# Çăхава тивĕçтерме май çук

Мартăн 13-мĕшĕнче Муркаш район прокуратурине Муркашра пурăнакансенчен Муркашри 37 № пушар чаçĕн ертӳçи С.П. Митрофанов пирки çыру килчĕ. Унта вăл Д.М. Кивалкина ĕçе илни тата çулталăк пуçламăшĕнче хулиганла ĕçсем туни пирки каланă. Ку фактсем пирки тунă йышăнăва район хаçатĕнче пичетлесе кăларма ыйтаççĕ.

Анонимлă çырура асăннă тăрăх Муркашри 37 № пушар чаçĕн ертӳçи С.П. Митрофанов 2006 çулта пушарнăйра ĕçлеме Д.М. Кивалкина ĕçе илнĕ. Вăл вара ĕçе пырса курăнмасть, ячĕшĕн кăна ĕçре шутланса тăрать, ĕç укçине С.П. Митрофанов хăй илсе тăрать. Кунсăр пуçне С.П. Митрофанов 2007 çул пуçламăшĕнче ӳсĕрле Муркашри Октябре 50 çул урамра подъезд алăкĕн чӳречине тата çуртра пурăнакансен хваттер чӳречине çапса çĕмĕрнĕ.

Тĕрĕслев çавна кăтартса пачĕ. Д.М. Кивалкина 2006 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнче пушар чаçне 4-мĕш пушар хуралне Муркашри 37 № пушар чаçĕн ертӳçин приказĕпе ĕçе илнĕ. Ĕç параканпа – Чăваш Республикин «Пушара хирĕç кĕрешекен республика службы» патшалăх учрежденийĕпе тата Д.М. Кивалкинпа ĕç килĕшĕвне палăртман вăхăтлăха тунин килĕшĕвĕ пур.

Тĕрĕслев иртнернĕ май С.П. Митрофанов çавна кăтартса пачĕ. Д.М. Кивалкина пушар чаçне заявлени панине кура йышăннă, ĕç законодательствине пăсман. Ăна ĕç укçи штат расписанине кура тӳлесе тăраççĕ. Кăçал çулталăк пуçламăшĕнче хулиганла ĕçсем тунине тупса палăртман, милицие илсе пынă тĕслĕхсем пулман.

Д.М. Кивалкин ăнлантарса панă тăрăх, хальхи вăхăтра вăл Муркашри 37 № пушар чаçĕн пушарнăйĕнче шутланса тăрать, хăйĕн тивĕçĕсене должность инструкцине тата ĕç килĕшĕвне кура пурнăçласа пырать. Ĕç укçине те хăех илсе тăрать.

Районти шалти ĕçсен пайĕнчен тăратнă информаципе килĕшӳллĕн С.П. Митрофанов Муркашра Октябре 50 çул урамра кăçал çулталăк пуçламăшĕнче тунă хулиганла ĕçсем пирки палăртни, тĕрĕслев материалĕсем çук.

С.П. Митрофанов РФ Уголовнăй процессуаллă кодексăн 144 статйипе пăхнă хулиганла ĕçсем тунине тĕрĕслеме çыру копине районти шалти ĕçсен пайне ярса панă.

**Ю. СЕМЕНОВ,**
**район прокурорĕн пулăшаканĕ, юстици советникĕ.**